Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчене тухать

75-76 (7392-7393) №№ * Шăмат кун, 2006 çулхи сентябрĕн (авăн) 9-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Шупашкарта – Координаци канашĕн ларăвĕ

## Раççей Муркашсен опычĕпе паллашать





***Сентябрĕн 8-9-мĕшĕсенче Шупашкарта Раççей Культура тата массăллă коммуникацисен министерстви çумĕнчи Координаци канашĕн IV ларăвĕ ĕçлет.***

***Кунашкал пысăк шайлă мероприяти – унта РФ культура тата массăллă коммуникацисен министрĕ А.С. Соколов, регионсенчи ĕç тăвакан влаçăн культура тытăмĕнчи ертӳçисем, Раççейĕн Культура, Экономика аталанăвĕн, Ял хуçалăхĕн министерствисен, Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин представителĕсем хутшăнаççĕ – Чăваш Енре пулса иртет.***

***Координаци канашĕн ĕçĕн тĕп темисенчен пĕри – Раççей Федерацийĕнчи ял культурин çивĕч ыйтăвĕсем тата аталану пуласлăхĕ.***

***Сентябрĕн 8-мĕшĕнче РФ культура тата массăллă коммуникаци министрĕ А.С. Соколов, регионсен ĕç тăвакан влаçăн культура тытăмĕн ертӳçисем пирĕн районти Атапайĕнчи, Сосновкăри вĕрентӳпе культура центрĕсенче пулчĕç, вĕсен ĕçĕпе тĕплĕн паллашрĕç.***

***РФ культура тата массăллă коммуникаци министрĕ А.С. Соколов Муркашсен опычĕ пĕтĕм Раççейшĕн тĕслĕх пулнине палăртрĕ. Культура сывăх вăхăтрах нацин пиллĕкмĕш проекчĕ пулассине палăртрĕ.***

**А. ИВАНОВ.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: РФ культура тата массăллă коммуникаци министрĕ А.С. Соколов, ЧР культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министрĕ П.С. Краснов, район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов Атапайĕнчи вĕрентӳпе культура центрĕнче; Раççей министрĕ А.С. Соколов журналистсен ыйтăвĕсене хуравлать.**

**В. Лаврентьев тата Н. Григорьева сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Паттăр кăйкăра асра тытса

## Шкул ачисем чупăва тухрĕç

Сентябрĕн 5-мĕшĕнче пирĕн ентеш, СССР летчик-космонавчĕ, икĕ хут Совет Союзĕн Геройĕ Андриян Григорьевич Николаев чĕрĕ сывă пулнă пулсан, çитмĕл çичĕ çул тултарнă пулĕччĕ. Паттăр кăйкăр ячĕпе пирĕн районта Калайкасси шкулĕ тата районти ача-пăча библиотеки хисепленсе тăраççĕ. Сумлă ентешĕмĕре хисеплесе районта та, республикăра та мероприятисем ирттереççĕ.

Андриян Григорьевича халалласа сентябрĕн 6-мĕшĕнче район администрацийĕн çурчĕ умĕнче митинг пулса иртрĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов сăмах каларĕ:




– Эпир паттăр кăйкăр ятне асра тытма, çӳле çĕклеме тивĕç. Унăн ячĕ сире ăнăçусем тума хавхалантарса пытăр, -терĕ вăл.

Ун хыççăн Муркашри вăтам шкулта вĕренекенсем Муркаш – Калайкасси – Шупашкар маршрутпа чупăва тухрĕç. Çакă хастар çамрăксене ĕçре, вĕренӳре çитĕнӳсем тума хавхалантарĕ. Юрий Александрович спорта юратакансене вăрăм çула ăнăçлă чупса тухма сунчĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: чупăва хутшăнакансен ушкăнĕ. Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

Ĕç çи – 2006

### Комбайнерсем хушшинче

***Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче вырма ĕçĕсен хĕрӳ тапхăрĕ иртсе пырать пулин те, пухса кĕртеймен тырă-пулă хирте çук мар-ха. Çавăнпа та çак вăхăтра ĕç çине тимлĕх уйăракансем уйрăм хисепре. Вĕсене чыслама кĕрхи ĕççенче кăçал район ятарлă конкурссем йĕркелени пĕлтерĕшлĕ. Кăçал çак ăмăрту "хир карапĕсемпе" ĕçлекенсем тата çĕртме сухи тăвакансем хушшинче пырать. Ĕç пĕтĕмлетĕвĕ – кашни эрнере.***

Конкурса пăхса тăракан комисси пĕтĕмлетĕвĕпе августăн 29-мĕшĕнчен сентябрĕн 4-мĕшĕчченхи эрнере ĕçри тăрăшулăхпа ДОН-1500 комбайнсемпе ĕçлекенсем хушшинче пĕрремĕш вырăна никама та паман. Иккĕмĕш вырăнта – "Ударник" хуçалăхри **Алексей Владимирович Степановпа** "Оринино" хуçалăхри **Олег Геннадьевич Федотов** экипажĕсем (184-шар тонна, 200-шер тенкĕ валли свидетельствăсем). Виççĕмĕш вырăнта (160-шар тонна, 100-шер тенкĕ валли свидетельствăсем) "Свобода" хуçалăхри **Алексей Геннадьевич Алексеевпа** Е. Андреев яч. хис. хуçалăхри **Валерий Никодимович Осипов** механизаторсен экипажĕсем.

"Енисей" комбайнсен класĕнче пĕрремĕш вырăна никама та паман. Иккĕмĕш вырăна 196 тонна тырă çапса тĕшĕлесе "Оринино" хуçалăхри **Вячеслав Осипович Медов** экипажĕ тивĕçнĕ (200 тенкĕ свидетельстви). Виççĕмĕш вырăнта харăсах икĕ экипаж (160-шар тонна тырă çапса тĕшĕленĕшĕн 100-шер тенкĕ валли свидетельствăсем): "Рассвет" агрофирмăри **Анатолий Николаевич Ермаков** тата "Волга" обществăри **Андрей Федорович Пайков.**

СК-5 "Нива" комбайнсен класĕнче пĕрремĕш вырăна 186 тонна çапса илсе Ленин яч. хис. хуçалăхри **Ратмир Николаевич Скворцов** экипажĕ тухнă (300 тенкĕ валли свидетельство). Иккĕмĕш вырăнта "Ударник" хуçалăхри **Владимир Иванович Николаев** (143 тоннăшăн 200 тенкĕ свидетельстви). Виççĕмĕш вырăнта вара "Сеятель" хуçалăхри **Николай Меркурьевич Ванюшкин** экипажĕ. Вĕсем 118 тонна тырă çапса тĕшĕленĕшĕн 100 тенкĕ валли свидетельствăна тивĕçрĕç.

### Сухара маттур

Çĕртме сухи тăвакансем асăннă тапхăрти ĕçĕсемпе ДТ-75 класлă тракторсем хушшинче (эрнери ĕç норми 50 гектар) "Рассвет" агрофирмăри **Александр Васильевич Морозов** çĕнтернĕ. 51 гектар çĕртме сухи тунăскер "2006 çулта çĕртме сухи тăвакан чи лайăх механизатор" куçса çӳрекен вымпела тата 300 тенкĕ укçа свидетельствине тивĕçрĕ. Иккĕмĕш вырăнта Е.Андреев яч. хис. хуçалăхри **Сергей Валериевич Осипов** ( 50 гектар, 200 тенкĕ валли свидетельство). Виççĕмĕш вырăнта Ленин яч. хис. хуçалăхри **Алексей Лазаревич Петров** (39 гектар, 100 тенкĕ валли свидетельство).

Çĕртме сухинче Т-150, Т-150К, МТЗ-1221, ВТ-100 тракторсемпе ĕçлекенсем хушшинче (ĕç норми 75 гектар) пĕрремĕш вырăна никама та паман. Иккĕмĕш вырăнта "Рассвет" агрофирмăри **Николай Валериевич Буронов** (63 гектаршăн 200 тенкĕ свидетельстви).

Сухара МТЗ-80, МТЗ-82 тракторсемпе ĕçлекенсем хушшинчи ăмăртура пĕрремĕш вырăна никама та паман. Иккĕмĕш вырăнта Ленин яч. хис. хуçалăхри **Александр Владимирович Александров** (30 гектаршăн 200 тенкĕ свидетельстви). Виççĕмĕш вырăнта Ленин яч. хис. хуçалăхри **Юрий Витальевич Николаев** (23 гектаршăн 100 тенкĕ валли свидетельство).

### РАЙОНТИ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ КĔРХИ УЙ-ХИР ĔÇĔСЕМ СЕНТЯБРĔН 8-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТНИ

***Цифрăсен колонкисенче: 1. Тĕш тырăпа пăрça йышши культурăсем çулнă тата вырнă. 2. Улăм пухса тирпейленĕ (вырса çапнинчен, процентпа). 3. Кашни гектар пуçне тивĕçекен тухăç (центнерпа). 4. Кĕрхи культурăсем акнă (процентпа). 5. Çĕртме сухи тунă (гектарпа).***

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 57 | 51 | 13 | 31 | 50 |
| "Волга" | 90 | 100 | 16 | 94 | 75 |
| "Восток» | 100 | 100 | 20 | 129 | 120 |
| «Герой" | 100 | 47 | 21 | 27 | 110 |
| ЗАО "Агро-Урожай" | 100 | 100 | 19 | 0 | |
| К. Иванов яч. хис. | 72 | 50 | 11 | 31 | 32 |
| Ильич яч. хис. | 100 | 63 | 22 | 69 | |
| "Колос" | 55 | 0 | 9 | 0 | |
| Ленин яч. хис. | 68 | 62 | 16 | 60 | 250 |
| "Лидер" | 46 | 79 | 15 | 0 | 45 |
| "Нива" | 100 | 100 | 16 | 30 | |
| "Оринино" | 100 | 90 | 19 | 54 | 73 |
| "Передовик" | 76 | 12 | 10 | 35 | |
| "Свобода" | 92 | 87 | 20 | 73 | 200 |
| "Сеятель" | 69 | 90 | 13 | 50 | 125 |
| Суворов яч. хис. | 97 | 44 | 18 | 61 | |
| ООО АФ "Рассвет" | 85 | 50 | 17 | 87 | 348 |
| ОАО АФ "Нива" | 74 | 31 | 11 | 50 | |
| "Ударник" | 90 | 63 | 25 | 113 | 200 |
| "Хлебороб" | 73 | 72 | 11 | 32 | |
| Чапаев яч. хис. | 89 | 51 | 18 | 85 | |
| «Чемеево» | 80 | 53 | 19 | 0 | |
| Чкалов яч. хис. | 77 | 100 | 19 | 140 | 45 |
| **Районĕпе** | **80** | **62** | **17,2** | **54** | **1673** |